Паян – Республика кунĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

Муркаш район хаçачĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнчепе тухать

52 (7369) № ✻ Шăмат кун, 2006 çулхи июнĕн (çĕртме) 24-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

## ХАКЛĂ ЕНТЕШĔМĔРСЕМ! СИРЕ РЕСПУБЛИКА КУНĔ ЯЧĔПЕ САЛАМЛАТĂП!

Йăлана кĕнĕ тăрăх çак уяв-ĕçлевçĕ ку чухнехи Чăваш Ен пурнăçне çуллен çĕнĕлĕх илсе килет. Республика кунĕ – паллă пулăм, халиччен тунă ĕçсене хакламалли тата малашлăх аталанăвĕн тĕллевĕсене тишкерсе анлăлатмалли тапхăр. Юлашки вунă çуллăхра Чăваш Ен общество инфратытăмĕн, сывлăх сыхлавĕн, вĕрентӳ, культура, информаци технологийĕсен аталанăвĕнче малти вырăнсене йышăнчĕ. Çĕнĕ Чăваш Ен символĕсем – газ кĕртнĕ хуласемпе ялсем, пурăнмалли çĕнĕ çуртсем, тĕслĕх библиотекăсем, çемье врачĕн офисĕсем, Интернета тухмалли компьютерсем вырнаçтарнă вĕрентӳ центрĕсем, шкул автобусĕсем.

Пирĕн республика çĕнĕ ĕçсем пуçаракан регион, ĕçри шанчăклă партнер пулнине Раççейре те, тĕнчере те пĕлеççĕ. Чăваш Республикин 1 миллиард тенкĕлĕх патшалăх облигацийĕсене финанс рынокĕнче Федераци правительствин гарантийĕсĕрех, Тĕнче банкĕн çăклăхĕпе вырнаçтарни республикăна тĕнчери ятлă-сумлă тытăмсем чăннипех шаннине кăтартать. Çак укçа мĕн пур районпа хулана çулсем тума, социаллă çурт-йĕр лартма, республика халăхне ĕçмелли паха шывпа тивĕçтерме кайĕ.

Анчах этем çăкăрпа кăна пурăнмасть. Ахальтен мар пирĕн халăх çапла калать: "Ырă ят ылтăнран хаклă". Общество ырлăхĕпе чечекленĕвĕн никĕсĕ Ăс-хакăл тата Культура пулмалла. Çакна шанатăп: авалтан килекен кăмăлсипет пуянлăхĕ тата халăх йăли-йĕрки, тăван ене юратни, унăн историне хисеплени пирĕншĕн кашниншĕн çирĕп тĕрев пулса тăрĕç, республикăмăра тата илемлĕрех те илĕртӳллĕрех тума пулăшĕç.

Сире, хаклă ентешĕмĕрсем, çирĕп сывлăх, иксĕлми вăйхал, пархатарлă ĕçре çитĕнӳпе телей тата юрату сунатăп!

**Чăваш Республикин Президенчĕ Н.ФЕДОРОВ.**

## ХИСЕПЛĔ ЕНТЕШСЕМ!

Сире пурне те Республика кунĕ ячĕпе чун-чĕререн саламлатăп. Авалхи илемлĕ чăваш çĕрĕ çинче тĕрлĕ халăх килĕштерсе пурăнать, тăван ен аталанăвĕшĕн ырми-канми тăрăшать.

Юлашки çулсенче пирĕн районăмăр та палăрмаллах çĕнелчĕ. Муркаш енĕн сăн-сăпачĕ çеç мар, унăн ĕçчен çыннисен шухăш-кăмăлĕ те тĕпренех улшăнчĕ. Рынок хутшăнăвĕсен тапхăрĕнче район япăх мар аталанса пырать. Çакă пирĕн район çыннисем тăрăшуллă пулнине, хăйсен тивĕçĕсене пысăк яваплăхпа, тӳрĕ кăмăлпа пурнăçланине, мал ĕмĕтлĕ пулнине çирĕплетсе парать. Сирĕн ӳсĕмлĕ ĕçĕрте эсир тăван района, республикăна, çĕршыва юратни яр уççăн курăнать. Тавах сире çакăншăн.

Малашне те эсир, нимĕнле йывăрлăха пăхмасăр, ӳсĕмлĕ вăй хурасса, районăмăр республикăра ырă ятлисен шутĕнче пултăр тесе тăрăшасса шанса тăратăп.

Пурне те çирĕп сывлăх, ăнăçу, иксĕлми вăй-хал, телей тата вăрăм кунçул сунатăп.

**Район пуçлăхĕ Ю. ИВАНОВ.**

## ХИСЕПЛĔ ÇАМРĂКСЕМ!

Сире Раççей çамрăкĕсен кунĕ ячĕпе чун-чĕререн саламлатăп.

Çамрăксем – пирĕн пуласлăх. Район малашлăхĕ мĕнле пуласси сирĕн хастарлăхăрпа пултарулăхăртан нумай килет. Çавăнпах ĕнтĕ тĕп тĕллевĕмĕрсенчен пĕри шăпах сирĕнпе çыхăннă: çамрăксене пурнăçра хăйсен вырăнне тупма, пултарулăхне аталантарма, ĕçпе тивĕçтерме тăрăшмалла. Сывă пурнăç йĕрки, культурăпа тавракурăма ӳстересси, спорта юратни те çамрăксен кулленхи пурнăç йĕркин уйрăлми пайĕ пулса тăмалла.

Вĕренӳре маттур, ĕçре хастар çамрăксем пирĕн шанчăк пулса тăраççĕ. Малашне те эсир ырă пурнăç тăвассишĕн çунса тăрасса, пуçаруллă пуласса, аслисен йăли-йĕркине тытса пырасса, малалла аталантарасса шанатăп. Паянхи кăмăл-туйăм, хастарлăх сирĕнте пĕрре те ан иксĕлтĕр. Сире çитĕнӳ хыççăн çитĕнӳ тума çирĕп сывлăх, юрату, телей сунатăп. Ĕмĕтĕрсем çитсе пыччăр, шухăшлани пурнăçа кĕтĕр.

**Район пуçлăхĕ Ю. ИВАНОВ.**

## Июнĕн 27-мĕшĕ – Раççей çамрăкĕсен кунĕ

# Ĕçчен те маттур



*Çамрăксене хастар та ĕçчен, малти ретре пулни килĕшет. Паянхи яшсемпе хĕрсене пурнăç çапла пулма хистет те. Пасар саманинче урăхла май çук.*

*Муркашри Алексей Крольков ялта ĕç çук тесе алă усса лармасть. Вăл 100 ытла сысна усрать. Кăçалхи пилĕк уйăхра вăл 2,5 тонна аш-какай сутнă. Килти хушма хуçалăха ăнăçлă аталантарнăшăн Акатуйра район администрацийĕн Тав хутне те тивĕçрĕ хастар çамрăк.*

**Сăн ӳкерчĕкре: Алексей Крольков.**

## Чăваш Ен Республика кунне уявлать



*Июнĕн 16-мĕшĕнче тата 19 – 21-мĕшĕсенче республикăра Иоанн Предтеча алли (десници) пулчĕ. Республика кунĕ ячĕпе чăвашсене çӳлти Турă пехил пачĕ тейĕн. Десницăна 100 пин ытла çын пуç тайнă.*



*Халăх пултарулăхĕн Пĕтĕм Раççейри 14-мĕш "Раççей çăл куçĕсем" фестиваль уçăлчĕ. Кунта çĕршыври, чикĕ леш енчи вуншар художество пултарулăх коллективĕ хутшăнать.*



*Чăваш халăх поэчĕ Петĕр Хусанкай çуралнăранпа çитес çул 100 çул тултарать. Юн кун тĕп хулара унăн ячĕпе палăк уçăлчĕ. Поэтăн произведенийĕсен 6 томлă пуххи кун çути курать.*



*Июнĕн 22-мĕшĕнче Çĕнĕ Шупашкар – "Химпром" АУО автоçул уçăлчĕ.*

## Çырăнтару – 2006

**Райхаçатăн çырăнтару хакĕ ку хутĕнче те ӳсмест.**

**Хаклă вулакансем! «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçата иккĕмĕш çур çулта илсе тăма унччченхи хакпа – 135 тенкĕпе çырăнтараççĕ.**

**Иккĕмĕш çур çулта та пĕрле пулар!**

## Уяв умĕнхи репортаж

# Ял çынни уява хĕрӳ ĕçпе кĕтсе илет



**"Ударник" хуçалăхри Владимир Григорьевич Матвеев механизатор (сăн ӳкерчĕкре) иртнĕ кĕçнерни куна 500 тонна ытла сенаж çулнă.**

**Çапла хĕрӳ ĕçпе кĕтсе илеççĕ уява ял ĕçченĕсем.**

Тĕплĕнрех 2-мĕш страницăра вуласа пĕлĕр.

## *Саламлатпăр*



Июнĕн 24-мĕшĕнче Ярославка ялĕнче пурăнакан **Нина Ильинична ЦВЕТКОВА** хăйĕн 60 çулхи юбилейне паллă тăвать. Юратнă аннене, хуньамана, хисеплĕ асанне-кукамая, тараватлă тăхлачăна çак кун чи ăшă салам сăмахĕсене каласа унăн чăтăмлăхĕпе ĕçченлĕхĕ тата ырă кăмăлĕ умĕнче çĕре çити пуç таятпăр. Кĕрекӳпе телей яланах тулли, сывлăху çирĕп пулччăр санăн, ĕмĕрӳ вăрăм та тикĕс, ватлăху канлĕ килччĕр.

**Ывăлĕпе кинĕ, хĕрĕпе кĕрӳшĕ, мăнукĕсем, çывăх тăванĕсем.**